**Манăн кăмăл**

Вилем те, кăмăл ман çапла:

Инкеклĕ çын-мĕн тĕл пулсан

Мĕнпе май пур — пулăшмалла.

Пулăшмасан чун пуснă ман.

Таса чĕреллĕ тӳр этем

Хăй чăн çинчен чунне хуçсан —

Юнпа тулать ман шур чĕрем,

Унпа пĕрле çунап ялан.

Тӳр çын телейлĕ пек туйсан

Эп хам та савăнап унпа,

Сăпайлă çынсене чунтан

Сунатăп ĕмĕр ыр курма.

Юратнă халăх хушшинчен

Ан тухтăрччĕ нуша сасси,

Ан пултăрччĕ çак çĕр çинче

Вĕлересси, çаратасси.

Курасчĕ ман тĕнче тени

Çурхи кунсем пек çиçнине,

Курасчĕ пĕтĕм ĕç çынни

Культурлă, ырă пурннине.

Эп çакăншăн кăна çунап,

Пĕр çавăншăн вăя хурап.

1948

*Элкер, С. Манăн кăмăл : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 255.*